Миграци службин районти территори пунктĕнче

# Раççейре вăхăтлăх пулма та саккуна пăхăнмалла

Юлашки 10 – 15 çулта пурнăç тата çынсем хушшинчи хутшăну тĕпрен улшăннăран саккунсем те пĕр вырăнта юлмарĕç. Çакă РФ гражданĕсем ют çĕршывсене тухасси тата ют çĕршыв гражданинĕсем пирĕн çĕршыва кĕресси çинче те палăрать. 2002 çулта “Ют çĕршыв гражданĕсен Раççей Федерацийĕнчи право положенийĕ çинчен” Федераллă саккун вăя кĕчĕ. Паян эпĕ сире ют çĕршыв гражданĕсен Раççей Федерацийĕнче вăхăтлăх пулмалли йĕркипе паллаштарас тетĕп. Кунта малтанах “ют çĕршыв гражданинĕ”, “гражданствăсăр çын”, “миграци карти” ăнлавсене пĕлмелле. Ют çĕршыв гражданинĕ – Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулман, анчах ют çĕршыв гражданствине çирĕплетекен ĕнентерӳллĕ хутсемпе пулăмсем пур çын. Гражданствăсăр çын – Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулман тата ют çĕршыв гражданствине çирĕплетекен ĕнентерӳллĕ хутсемпе пулăмсем çук гражданин. Миграци карти – Раççей Федерацине кĕрекен ют çĕршыв гражданинĕ пирки кăтартусем кăтартакан тата ют çĕршыв гражданинĕ Раççей Федерацийĕнче вăхăтлăх пулнине контроллекен документ.

Ют çĕршыв гражданинĕн Раççей Федерацийĕнче мĕн вăхăт пулмаллине ăна алла панă виза вăхăчĕ палăртать.

Раççей Федерацине виза илме ыйтман йĕркепе вăхăтлăх килнĕ ют çĕршыв гражданинĕн Раççей Федерацийĕнче вăхăтлăх пулмалли срокĕ, Федераллă саккунра пăхнă хăш-пĕр уйрăм тĕслĕхсемсĕр пусне, 90 кунран иртмелле мар. Раççей Федерацийĕнче вăхăтлăх пулакан ют çĕршыв гражданинĕн Федераллă саккунпа пăхнă виза вăхăчĕ е вăхăтлăх пулмалли тапхăр тухсан, çак тĕле пулмалли е вăхăтлăх пурăнмалли срока тăстармасан, çĕршывран тухса каймалла.

Ют çĕршыв гражданинĕн Раççей Федерацинче пулмаллин сăлтавĕсен вăхăчĕ хушăннă е катăлнă пулсан, ют çĕршыв гражданинĕн Раççейре пулмалли вăхăчĕ те хушăнма-катăлма пултарать. Çакна валли ют çĕршыв ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ĕç тăвакан федераллă органăн е шалти ĕçсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ĕç тăвакан федераллă органăн, е унăн территори органĕн ирĕкĕ кирлĕ.

Раççей Федерацине виза илмесĕр кĕмелли ирĕкпе килнĕ тата ĕç килĕшĕвĕ тунă е федераллă саккунпа килĕшӳллĕн ĕçсем пурнăçлама (услугăсем пама) граждангла право килĕшĕвĕ тунă пулсан, ют çĕршыв гражданинĕн Раççейре пулмалли вăхăчĕ килĕшӳ тунă вăхăта, анчах çулталăкран ытла мар, Раççее кĕнĕ кунран пуçласа, тăсăлать. Кунта та ют çĕршыв гражданинĕн Раççей Федерацийĕнче вăхăтлăх пулмалли тапхăрне тăсассине ĕç тăвакан федераллă органсен территори органĕсем йышăнаççĕ, кун пирки миграци карттинче паллă тăваççĕ.

Раççей Федерацийĕнче ют çĕршыв гражданĕсен вăхăтлăх пулмалли йĕркине пăснă ют çĕршыв гражданĕсем тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн административлă право йĕркине пăснин кодексĕн 18.8 статйипе адмпротокол çыратпăр. Çакнашкал тĕслĕхре хăйĕн патне ют çĕршыв çыннине илсе килнĕ Раççей гражданинĕ йĕрке пăснине курсан, ăна та административлă айăплав кĕтет.

Халĕ калани пирĕн района пырса тивет-и тесен, кунта хирĕçле хурав пулаймасть, мĕншĕн тесен паян пирĕн районта та вăхăтлăх пулма ирĕк илнĕ ют çĕршыв гражданинĕсем çук мар. Вĕсен шутĕнче Азербайджан çыннисем виççĕ, виçĕ узбек, пĕр беларус, пĕр молдаван. Каламалла, вĕсем пирĕн патра миграци карттисемпе саккунлă пурăнаççĕ.

**З. СОРОКИНА, РФ федераллă миграци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн пуçлăхĕ.**

Выставка иртрĕ

# Пултаруллă ачасем



Июнĕн 1-мĕшĕнче район администрацийĕнче Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна халалласа инвалид-ачасен пултарулăх выставки иртрĕ. Кунта уйрăмах вунултă çулхи пачах курман Аня Столярована (Шетмĕпуç ял тăрăхĕ) палăртса хăвармалла. Вăл ятарлă шкул-интернатра вĕренет, унтах тĕрлĕ ăсталăха алла илет. Çавăн пекех Кристина Павлова (Çатракасси ял тăрăхĕ), Даша Иванова (Оринин ял тăрăхĕ) ĕçĕсем те çӳллĕ шайра пулчĕç. Ачасем пурнăçра алă усса ӳркенсе лармаççĕ, хăйсене тĕрлĕ шайра аталантарма тăрăшаççĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: выставкăра.**

Ыйтăр – хуравлатпăр

# Кредит пама пуçларĕç

***Наци проекчĕсем пурнăçа кĕни пирки нумай калаçаççĕ пулин те, районта килти хушма хуçалăхсем кредит илни пирки калакан çук. Илеççĕ-и ăна ял çыннисем?***

**С. СЕРГЕЕВ.**

Вулавçă ыйтăвĕ çине Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин ял хуçалăх производствине пулăшас ыйтусемпе ĕçлекен районти специалисчĕ **Надежда Ивановна ИВАНОВА** хуравлать:

– РФ Президенчĕ ял хуçалăхĕпе палăртнă наци проектне пурнăçа кĕртме паян пур çулсем те уçă. Çав шутра килти хушма хуçалăхсенче те. Килти хушма хуçалăхсене аталантарма майăн 31-мĕшĕ тĕлне пирĕн районта Россельхозбанк урлă 26 çемье 5205 пин тенкĕ кредит илнĕ. Çынсем заявкăсене нумайăйăн-перекет банкне панăран çак кунсенче перекет банкĕ те кредит пама пуçларĕ.

Тирпей-илемшĕн

# Çимĕк уявне хатĕрленсе



**Июнĕн 11-мĕшĕнче Çимĕк уявне паллă тăватпăр. Çав кун ĕлĕкренпех ваттисем çăва çине кайса вилнисене сума сунă, масарсене тирпей-илем кĕртнĕ.**

**Çак ырă йăлана асăнса Муркаш ял тăрăхĕ пуçарнипе ял тăрăх депутачĕсемпе ял старостисем Çĕньял Муркаш ял çăви çинче пулса кунта тирпей-илем кĕртессипе тимлерĕç. Ирина Софронова, Владимир Толстов, Михаил Петров, Галина Анисова депутатсем, Виталий Романов староста уйрăмах пуçарулăх кăтартрĕç.**

**Çак ырă тĕслĕхе тĕпе хурса ял тăрăхĕнчи ытти çăвасем çинче те йĕрке тăвассипе ĕçсем пурнăçлама палăртнă.**

**Хамăр инф.**

**Сăн ӳкерчĕкре: масар çинче.**

Асăрханулла пулмалла

# Вут-кăвар шӳтлемест. Никама та хĕрхенмест

Çак кунсенче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ларăвĕ пулса иртрĕ. Чи малтанах унта пушар хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă ыйтăва пăхса тухрĕç. Çакă ахальтен мар.

Кăçалхи 5 уйăхра иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен пушар районта 4 хут ытларах тухрĕ. Ытларах уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче. Çак хушăра иртнĕ çул вут-кăварта кун-çул пĕрре те татăлман пулсан, кăçал вара çакнашкал тĕслĕх 7 пулчĕ те ĕнтĕ. Çавăнпа та пушарпа кĕрешмелли правилăсене пур çĕрте те пăхăнмалла, ку тĕлĕшри мероприятисене вăхăтра тата пахалăхлă ирттермелле.

Май уйăхĕн 7-25-мĕшĕсенче Чăваш Республикинчи Госпожнадзор управленийĕн ĕçченĕсем шăпах пирĕн районти ял тăрăхĕсенче ку тĕлĕшпе тĕрĕслев ирттерчĕç. Асăннă управленин ертӳçин çумĕ Яков Андреевич Егоров ларура çакна палăртрĕ: ял тăрăхĕсен 2/3 пайĕ, чăннипех те, ку тĕлĕшпе яваплăха туйса ĕçлет.

Чăннипех те, паян пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕ çивĕч тăрать. Шăп тĕрĕслев вăхăтĕнче, паллах, Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пек “больничнăй” çине кайма та пулать, анчах вырăнта татмалли проблемăна вырăнтах, хамăрăнах татса памалла. Пушар машини ĕçлеменнин чăн сăлтавне “Передовик” хуçалăхри пек стартер ĕçлемест теме те пулать. Тавралăхра шăп чух. Анчах ялта кĕтмен çĕртен вут-кăвар пуçне çĕклесен, унран ниçта та тарса пытанаймастăн. Çавăнпа та район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн сăмахĕсене ăша хывмах лекет, ăна пурнăçлассишĕн çине тăмах тивет.

– Эпир – яваплă çынсем, халăх шанса суйларĕ пулсан, проблемăна татса памаллах. Иртнĕ çулсенче партипе правительство пире вăл е ку ĕçе пурнăçлама хушнă пулсан, паян пире пурнăç хушать яваплăха туйма. Мĕншĕн тесен вут-кăвар пирĕн укçа-тенкĕ пуррипе çуккине ыйтса тăмасть. Çавăнпа та, кăмăл пулсан, бюджет укçи-тенкисĕрех пушар машинине тытса тăмалли майсем тупма пулать,- терĕ Юрий Александрович. Çавăнпа ял тăрăхĕсенче паян унта вырнаçнă предприятисемпе пĕрле пур пушар машинисене тытса тăма майсем тупмаллах.

Пушар ыйтăвне хускатнă май, акă, мĕн çинче чарăнса тăрас килет. Çынсен, ялта пурăнакансен яваплăхĕ çинче. Чăвашра ĕлĕкех пысăк ĕçе халăхпа пĕрле – ниме йĕркипе пурнăçланă. Инкек-мĕн сиксе тухас пулсан та, халăхпа пĕрле пулăшнă. Паян вара çынсен психологийĕ улшăнчĕ-ши? Пушар тухсан, вăхăтра çитеймен пушар машинишĕн кама кăна айăпласа вăрçмастпăр пулĕ, анчах алла витре тытса кӳршĕри пушара сӳнтерме васкамастпăр. Кусем пуш сăмахсем маррине Я. А. Егоров сăмахĕсем те тепĕр хут çирĕплетеççĕ. «Шетмĕпуç патĕнче вăрман çывăхĕнче тухнă пушарта ял тăрăхĕн пуçлăхĕ витре тытса вутпа кĕрешнисĕр пусне урăх никама та курма пулмарĕ»,- терĕ вăл.

Çавăнпа та ял тăрăхĕсен ку тĕлĕшпе çынсемпе ăнлантару ĕçĕсем ирттерсен те вырăнлă пулмалла. Тепĕр тесессĕн, эпир пурте – çынсем, апла пулсан, вăхăчĕ çапла, тесе совеçĕ пурри пирки манни никама та чыс кӳмĕ. Яваплăха туймалла пирĕн. Кунта эпĕ сăмаха пĕчĕккĕн иртнĕ çулти кивĕ курăка чĕртсе янă тĕслĕхсем çине куçаратăп. Кăçал çав сăлтавпа миçе хут çула тухмарĕç пулĕ пушар машинисем?

– Çынсем ăпăр-тапăр купи çунать тесе калама хăрама пуçларĕç, çурт çунать, тесе, пушар машинисене чĕнеççĕ,-терĕ районти пушар хуралĕн ертӳçин çумĕ А.Н. Куликов ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ларăвĕнче. Юрать-ха, Муркаш райповĕ, “Муркашри çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх” МУП бензинпа пулăшать.

Кунта мĕнле пĕтĕмлетӳ тумалла? Кашни çыннăн яваплăха туймалла. Çавăнпа та çитес çул çакăн пек ан пултăр тесен, курăка хыт-хура пуличчен çулассине йĕркелемелле вырăнсенче. Пăрахнă пĕр шăрпăк мĕнле инкек патне илсе пынине кăтартакан тĕслĕхе шырама аяккалла каймалла мар. Юнкăра пĕр урам çунса кайнине çеç куç умне кăларăр.

Пушар шӳтлеме юратмасть, пытанмалла та вылямасть пирĕнпе. Çакăн пирки манас марччĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен те, ялсенче пурăнакансен те. Уявра çеç мар пĕрле пуласчĕ, инкекрен те пĕрлех сыхланасчĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

# Пĕлтерӳсем. Объявления


**Продаю родословных щенков русской гончей. Дата рождения 1.04.96 г. Телефоны: 8-927-840-62-57, 30-2-37 (домашний).**

**Продаю блоки керамзитобетонные 20x20x40, 12x20x40 (также и цветные), песок речной, гравмассу, щебень, цемент, шифер, рубероид. Доставка по Моргаушскому району бесплатно. Обращаться по телефонам: 2-18-80, 8-903-379-16-62. Андрей. 1-2.**

**Продается жилой дом со зрелым садом и надворными постройками в селе Большое Карачкино Моргаушского района.**
**Обращаться по тел.: 2-18-01; 2-16-63; 8-845-377-35-83. 2-2.**

**В селе Моргауши на территории рынка открылся магазин с большим ассортиментом бытовой техники «ВАСИЛЕК». В магазине большой выбор светильников, люстр, сотовых телефонов. При покупке телефона вы можете здесь же подключиться на услуги: «Билайн», «Мегафон», «МТС», «Смартс» по различным тарифам. КРЕДИТ 0 % БЕЗ ПЕРВОНАЧАЛЬНОГО ВЗНОСА.**
**В магазине «Василек» подключение бесплатное и к тому же, каждому подключившемуся или купившему сотовый телефон, мы дарим подарок.**
**3-4.**

**Для тех, кто строится и строит** 10-10.

Доски 50 мм. x 6 м. (хв.) – 2200 руб. /куб. м.;
доски 25 мм. x 6 м. (хв.) – 2100 руб. /куб. м.;
доски 50 мм. x 6 м. (листв.) – 1800 руб. /куб. м.;
доски 25 мм. x 2 м. (хв.) – 1500 руб. /куб. м.;
горбыль 2 м. (хв.) – 1000 руб. /куб. м.;
штакетник (хв) - 10 руб. п/м;
подтоварник 6 м. (хв.) – 1600 руб. /куб. м.;
жерди 6 м. (хв.) – 120 руб. шт.; Предоставляется автотранспорт.
Тел.: 2-18-60 (раб.); 2-18-70 (дом.); сот.: 8-905-345-31-09.

**ОАО «Моргаушский кирпичный завод» реализует керамический кирпич и приглашает на работу водителей, слесарей, электриков, стропальщиков, съемщиков, садчиков.**
**Предусмотрена перевозка работников.**
**Справки по тел.: 2-11-77, 2-16-38.**
**4-4.**

**ЗАО «Агро-Урожай» продает:**
**- ГАЗ 33-07(бортовая) - 1994 г. в.**
**- ГАЗ 35-07 (самосвал) - 1987 г. в.**
**- Трактор МТЗ-80А - 1980 г. в.**
**- Комбайн СК-5 «Нива» - 1985 г. в.**
**- Автобус «Кубань» с документами (дешево).**
**Принимаем кругляк для распиловки.**
**Адрес: д. Б. Токшики, тел.: 2-18-10. 2-2.**

**Февраль уйăхĕнче пăруланă тĕксĕм хăмăр тынашки çухалчĕ. Паллисем: хырăм айĕ шурă, виçĕ ури шурă, çамки çинче те кăшт шурă паллă пур, хыçалти пĕççи патĕнче икĕ енче те каллех шурă паллăсем. Куракансене Анаткас Апаш ялĕнчи Юрий Павлович Леонтьевсен çемйине пĕлтерме ыйтатпăр е Чуманкасси ял тăрăхне, тел.: 41-2-36. Тупакана ахаль тумăпăр.**

**Августра пăруламалли ĕне сутатпăр. 5 пăруланă, хĕрлĕ тĕслĕ. Тел.: 60-3-41 (каçхине 20-00 сех.). 1-2.**

**Куçарса каймалли йывăç пӳрт сутатпăр, 7мx12 м. Отарккă ялĕ. Тел.: 8-906-381-65-74, 8-927-861-42-87.**



**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Директор-гл. редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа.
Тираж 3530.
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 02.06.2006 г.
Заказ 1483
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыш - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.